# Эп каяп çĕршыва сыхлама

Сăвви *В. И. Давыдов-Анатрин*





ки хут лар-сам эс, çу-на- тăм, ка-лаç-са йă-па-тар кă-мă-
ла. ю-лаш- ки хут лар-сам эс, çу-
на- тăм, ка-лаç- са йă-па- тар кă-мă-
Тепĕр хут юрлама
Вĕçлеме
ла 2. Пĕр-пĕр-|| ра.

1. Савнӑ тусӑм, санран уйрӑлатӑп,
Вӑхӑт ҫитрӗ — тухса каймалла.
Юлашки хут ларсам эс, ҫунатӑм,
Каласса йӑпатар кӑмӑла. } 2 хут

2. Пӗр-пӗрне юратса пурӑнсассӑн
Питӗ йывӑр иккен уйрӑлма.
Хура пӗлӗт килет кассӑн-кассӑн,
Каймалла ҫӗршыва сыхлама. } 2 хут

3. Ӑсатса яр мана, савнӑ тусӑм,
Чипер юл, туслӑха эс упра.
Ҫуталса хӑпарать ирхи шуҫӑм,
Каяс ҫул-йӗр выртать умӑмра. } 2 хут

# Эпир ҫуралнӑ вырӑнсем

Сӑвви *В. И. Давыдов-Анатрин*






1. Саватăп эпĕ ирхине
Садри сар кайăк юррине.
Мĕнле чипер, мĕнле хитре,
Çĕклет ыр туйăм чĕрене. } 2 хут

2. Васкатăп эпĕ уй-хире,
Çĕр ăстисем пурте ĕçре:
Акаççĕ тулă, хура тул,—
Çĕршывăм, вăйлă, пуян пул! } 2 хут

3. Тухатăп эпĕ урама,
Ĕçрен килсен кăштах канма.
Ташлаççĕ шурă хурăнсем,
Эпир ÿстернĕ çăкасем... } 2 хут

4. Мĕнле хитре, чипер вĕсем,
Эпир çуралнă вырăнсем...
Тăван кĕтес, татах çĕклен,—
Çĕнелтĕр пурнăç çулсерен! } 2 хут